

сайт: putpobedy.ru

# ШКУЛ САССИ

Проект авторĕ – Светлана Чикмякова.



**Сăмах – Хапăсри вăтам шкул ачисене**

## Хамăн шкулпа мухтанатăп



**Мĕн-мĕн те, шкулсем пирĕн çĕршывра çителĕклĕ. Кашни ача унтан вĕренсе, кирлĕ пĕлӳ илсе тухасси çинчен çеç мар, малашлăхра ӳсĕмлĕ пуласси пирки те ĕмĕтленет. Шăпах çакăн пек «Çитĕнӳ шкулĕ» ĕнтĕ пирĕншĕн Хапăсри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул.**

Аттепе анне мана пĕрремĕш класа илсе килнĕренпе сисĕнмесĕрех вунă çул иртсе кайрĕ. Халĕ эпĕ пĕлӳ çуртĕнчен вĕренсе тухакансен йышĕнче ĕнтĕ.

Пирĕн шкул сала варринчех вырнаçнă, ял çынни-и, хăна-и – çутă чӳречесемлĕ, шап-шурă та илемлĕ çурта асăрхамасăр никам та иртсе каяймасть. Манăн «иккĕмĕш кил» пурне те хăтлă та тирпейлĕ тавралăхпа, юмахри пек хӳхĕм чечек клумбисемпе хăйĕн патне илĕртет.

Эпĕ ăна çĕршыври чи лайăххисен шутне кĕртетĕп. Чи малтанах – унта ăслă, опытлă, хăйĕн ĕçне чунтан параннă учительсем тимленишĕн. Кашни кун вĕсем пире пур енĕпе те лайăхрах пулма тăрăшаççĕ – вĕренӳре, йăлара, пĕр-пĕрин хушшинче... Хамăра тĕрĕс тытма хăнăхтараççĕ, чи кирлĕ хаклăхсене ăнлантараççĕ... Чăн-чăн учитель кăна тĕрлĕ шухăш-кăмăллă, характерлă, хăйнеевĕрлĕ ачасене туслă пĕр пĕрлĕхе пĕтĕçтерме пултарать. Пирĕн шкулта вара шăпах çавăн пек педагогсем.

Вĕрентекенсем кирек мĕнле самантра та пулăшу аллине тăсма хатĕр. Пĕр-пĕр темăна е задание ăнланман-и, ыйту пур-и, е сĕнӳ-канаш кирлĕ-и – яланах учительсем патне пыма пултаратпăр. Хăçан, мĕнле тусан лайăххине вĕсем тĕрĕс ăнлантарĕç.

Пĕрле вĕренекенсем те шкул пурнăçĕнче манăçми йĕр хăвараççĕ. Вунпĕрмĕш çул кунсерен пĕрле, туслă эпир. Шкулта эпĕ чăн-чăн çывăх юлташсем тупрăм теме пултаратăп.

Вĕренекенсен, педагогсен чылай çитĕнĕвĕ, паллах, шкул директорĕн О.Жебелевскаян ячĕпе çыхăннă. Вăл пултарулла ертӳçĕ, пысăк опытлă учитель. Хăйĕн тавралла чи маттур вĕрентекенсене пуçтарма пултарчĕ. Вĕсемшĕн мĕнпур ача хаклă, кашнишĕн пĕрешкел пăшăрханаççĕ, савăнаççĕ, хавхалантарма тăрăшаççĕ.

Манăн атте-анне те, паллакансем те, выпускниксем те шкул çулĕсене ăшă туйăмсемпе аса илеççĕ. Уйрăмах йăлана кĕнĕ мероприятисем асрах: театрализациленĕ уявсем, хăйтытăмлăх кунĕсем, спорт ăмăртăвĕсем, ыттисем. Вĕренӳ учрежденийĕнче ырăлăх, ăнланулăх хуçаланни ачасемшĕн те, ашшĕ-амăшĕсемшĕн те кăмăллă.

Кашни çыннăн кун-çулĕнче пĕлӳ тĕнчипе паллаштаракан, пурнăça вĕрентекен, çитĕнӳ «картлашки» пулса тăракан хăйĕн шкулĕ пур. Пирĕн шкулăн тĕп пуянлăхĕ вара унăн чун-чĕри тесе шутлатăп. Вăл учительсен, вĕренекенсен, ашшĕ-амăшĕсен пĕр шухăшлăхĕпе, пĕрлĕхĕпе çуралать. 30, 40, 50, 100... çулирттĕр – тăван шкул çамрăклансах пырĕ, мĕншĕн тесен вăл çулсеренех çĕнĕрен те çĕнĕ ача сассисемпе янăраса тăрĕ.

Шăпах та ку шкулта вĕренме тӳр килнишĕн эпĕ тивĕçлипе мухтанатăп.

**Юлия ШЛЯПКИНА, 11-мĕш класс.**

## Паллă вырăнсем

**Çын ăс-тăнĕ нумай вырăна мĕнле те пулин пĕлтерĕшлĕ символпа асра хăварать.**



Мускав çинчен калаçнă чухне эпир Хĕрлĕ площаде аса илетпĕр, Францие Эйфель башнипе, Китая Хупă хулапа тата Аслă Китай стенипе çыхăнтаратпăр. Çуралнă тăрăх нумай чухне тăван килпе, çывăхри вăрманпа тата пĕвепе аса килет. Ытларах вĕсем – чĕрене кĕрсе вырнаçнă вырăнсем. Çынран хăй пурăнакан çĕрти паллă япалана асăнма ыйтсан вăл кăмăлпах пурте пĕлекен объектсене пĕлтерет.

Ман тăван Чăваш енĕн тата Шупашкар хулин символĕ – Амăшĕн монументчĕ. Ăна ачисене хӳтĕлекен мĕнпур аннене халалланă.

Тăвансем патне хăнана кайнăччĕ. Ун чухне эп çиччĕре пулнă. Каçхине Шупашкар заливĕ çывăхĕнче уçăлса çӳрерĕмĕр. Ун чухне эпĕ ку скульптурăна пуçласа куртăм, вăл мана мăнаçлăхĕпе тата илемĕпе тыткăнларĕ. Анне палăкĕ 46 метр çӳллĕш, каçхине ун тавра тĕрлĕ çутă ялкăшать. Каярах эпĕ ку скульптурăна Владимир Нагорнов архитектор ертсе пынипе 2003 çулта çĕклесе лартнине пĕлтĕм.

Çакăн пек паллă вырăнсем пулни аван. Эпир вĕсемпе мăнаçланатпăр. Раççейĕн ытти регионĕнче тата ют çĕршывра пурăнакансем те Чăваш ене çак монумент тăрăх пĕлеççĕ.

**Кира ПЕТРОВА, 6-мĕш класс.**

## Çырла тулăх пулчĕ



**Çуллахи каникул вăхăтĕнче шкул пахчине çырла пуçтарма çӳрерĕмĕр.**

Кăçал сад улма-çырларан пуян. Хурлăхан, чие çырлисем лайăх пиçсе çитнĕ, пуçтаракансене кĕтрĕç. Ку çимĕçсем питĕ усăллă, пирĕн сывлăха тĕрлĕ витамин-минералсемпе пуянлатаççĕ. Эпир савăнсах çырла пуçтартăмăр, витре хыççăн витре тулса пычĕ. Çак çырласене шкул столовăйĕнче шăнтса хураççĕ те, кайран вĕренӳ вăхăтĕнче эпир тутлă та сиплĕ компот ĕçсе савăнатпăр.

**Александр АЛЕКСАНДРОВ, 6-мĕш класс.**

## Пĕрремĕш пулă

**Ман асатте – хастар пулăçă. Мĕн тĕрлĕ вăлта, çекĕл, илĕртмĕш çук пулĕ унăн! Пурте ку енĕпе вăл профессионал пулнине пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен вăл шыв хĕрринчен киле пĕрре те пулăсăр таврăнман.**



Асаттене эпĕ темиçе те мана пĕрле илме ӳкĕтлерĕм. Тинех çак кун çитрĕ. «Пуçтарăн», – терĕ вăл мана. Чупкалама тытăнтăм – пĕрле мĕн илмелле-ши тетĕп. Эп хыпкаланнине курсан асатте кулса ячĕ, пулла кайма пĕтĕмпех пуçтарнине, çула ыран ирпе ирех тухассине пĕлтерчĕ.

Хумханнипе час çывăрса каяймарăм. Асатте мана сĕм тĕттĕм вăхăтра вăратрĕ. Кӳлĕ хĕррине çитнĕ çĕре кăшт çуталчĕ. «Кунта яланах туртать», – терĕ асатте. Вăл çекĕл çине ăмана тăхăнтартма пулăшрĕ. Шывра ишекен поплавок çине куç илмесĕр пăхатăп, хама вара чăнчăн пулăç пек туятăп.

Анчах та пĕр вырăнта нумай ларма тиврĕ. Пулă вăлтана çакланасшăн пулмарĕ. Урăх çĕре куçрăмăр. Ку та пулăшмарĕ. Эп ывăнса çитрĕм ĕнтĕ, çывăрас килсе кайрĕ. Кĕтмен çĕртен ман поплавок туртăнчĕ те шывра çухалчĕ. «Туртать!» – кăшкăрса ятăм эпĕ, çурма çывăракан пулăçсене вăратса. Вăлтана туртса кăлартăм. Ман пĕрремĕш пулă – ал тупанĕ пысăкăш уланкă!

Асаттене вара ăнмарĕ. Вăл мăкăртата-мăкăртата апата улăштарчĕ, илĕртме тесе шыва пăрахрĕ, анчах та ăна пĕр пулă та лекмерĕ. Эпĕ вара мăнаçланатăп! Çывăрас килни йăлтах иртсе кайрĕ, пулăра тата çур кун ларма хатĕрччĕ. Анчах та киле пуçтарăнма вăхăт çитрĕ.

Асанне пĕртен-пĕр пулла асатте мар, эпĕ туртса кăларнинчен тĕлĕнчĕ. Уланкăна Барсик кушак аçи хаваспах çирĕ.

Çакăн хыççăн хама чăн-чăн пулăç тесе шутларăм. Анчах та асатте мана урăх пулла илмерĕ. Мĕншĕн-ши?

**Дарья ЖЕБЕЛЕВСКАЯ, 6-мĕш класс.**



### Маттур ача

Пурăнать Анаткасра
Женя ятлă пĕр ача.
Пулăшать асламăшне,
Пит итлет аслашшĕне.
Ашшĕ пек ĕçчен, маттур,
Тăрăшать ача сатур.
Пĕчĕк хăй, çапах правур.
Ĕненмесен – килсе кур.
Выльăх-чĕрлĕх юратать.
Касу пăхма кăмăллать.
Туя илет те васкать,
Хаваспах уя чупать.

**Людмила Волкова, асламăшĕ.**

*2-мĕш класа каякан Евгений Волков ашшĕ-амăшне кăна мар, аслашшĕ-асламăшне те пулăшма хастар.*



Кăçалхи çу шăрăх тăрать, çавăнпа та Кӳлхĕрри кӳллинче те шыва кĕрес текенсем ытларах пулчĕç.

**Ксения ОСИПОВА сăнӳкерчĕкĕ.**